# Чăваш искусствин паллă деятелĕ

*(Ф. П. Павлов вилнĕренпе 20 çул çитнĕ май)*

Октябрьти Социализмлă Аслă революци хыççăн чăваш халăхĕн формипе нациллĕ, содержанийĕпе социализмлă культури ÿссе аталанчĕ.

Чăвашсен нациллĕ музыкине, драматургине илсен, эпир яланах чăваш халăхĕн пултаруллă ывăлне — Ялта» драма авторне, Федор Павлович Павлова ырă кăмăлпа асăнатпăр. Вăл—чăваш музыкине пуçарса янă талантлă композитор, вал — чăвашсен малтанхи паллă драматургĕ.

Ф. П. Павлов—чăваш музыкин классикĕ—музыкăра та, литературара та К. В. Иванов традицийĕсене тытса пынă, вĕсене малалла аталантарнă.

Павлов 1892 çулхи сентябрĕн 13-мĕшĕнче Етĕрне уездĕнчи (халĕ Çĕрпÿ районĕнчи) Патăръел ятлă ялта çуралса ÿснĕ. Ялти шкултан вĕренсе тухнă хыççăн вăл икĕ класлă шкулта вĕреннĕ. 1907 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулне кайса кĕне. Чĕмпĕрте вĕреннĕ чухнех Павлов литературăпа, музыкăпа ытларах интересленнĕ. Унăн пултарулăхĕ те çак енĕпе вăйлăрах палăрнă.

Чĕмпĕрти шкултан вĕренсе тухсан, вăл кăштах ялта учитель пулса ĕçлет. Унтан ăна Чĕмпĕрти чăваш шкулне музыка преподавателĕ пулса ĕçлеме чĕнсе илеççĕ. Кунта вăл «Нарспи» авторĕпе—Константин Ивановпа паллашать, унăн çывăх юлташĕ пулса тăрать. Вĕсем иккĕшĕ те чăваш искусствине аталантарас шухăшсемпе пурăнаççĕ. Константин Васильевич литературăпа живопись енĕпе, Федор Павлович музыкăпа литература енĕпе ĕçлеме ĕмĕтленнĕ. Анчах иккĕшĕ те драматургипе ытларах интересленнĕ. Вĕсем «Нарспи» поэма тăрăх опера çырма хатĕрленнĕ.

1913 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнче Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренекенсен вăйĕпех «Иван Сусанин» оперăна лартнă. Пысăк рольсенчен пĕрне выляканĕ—Павлов (баритон) пулнă. Декорацине Иванов тунă.

Шăпах ĕнтĕ çак вăхăтра, 1910—1913 çулсенче, Федор Павлович музыкăпа литература ĕçне пуçăнать, чăвашла тата вырăсла сăвăсем çырать. Сăмахран, ун чухне вăл «Йăсаркка», «Шет хитре хĕр», «Вĕлле хурчĕ» ятлă сăвăсем çырнă. Унăн сăввисем пурте тенĕ пекех лирикăллă сăвăсем.



**Ф. П. ПАВЛОВ**

**П. Сизов** художник ÿкерчĕкĕ.

Çакăн чухнех Павловăн таланчĕ тĕрлĕ енлĕ пуласси палăрнă: вăл — педагог, музыкант, композитор, артист, поэт, драматург.

1917 çулхи революци вăхăтĕнче Павлов ялта учитель пулса ĕçленĕ. Кайрантарахпа тĕрлĕ ĕçре пулнă. Çапах та музыкăпа литература ĕçне вăл пăрахман. 1930 çулта, хăйĕн пĕлĕвĕсене пуянлатас, музыкăна тата та лайăхрах пĕлекен пулас тесе, вăл Ленинградри музыка консерваторине вĕренме кĕрет.

Анчах паллă композиторăн ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕреймен. Унăн сывлăхне ÿпке чирĕ ĕмсе пынă. 1931 çулхи июнĕн 2-мĕшĕнче вара вăл вăхăтсăрах вилнĕ.

Федор Павлович Павлов 39 çула яхăн пурăннă. Унăн таланчĕ совет саманинче пуринчен ытла сарăлса кайнă, вăл хăйне чăвашсен нациллĕ культурипе ним уйрăлми пĕрлештернĕ, чăваш музыкин классикĕ, паллă драматург пулса тăнă.

Ф. П. Павлов юррисенче чăваш халăхĕн кăмăлĕ, чун-хавалĕ палăрса тăрать.

Патша вăхăтĕнче чăвашсем хăйсен юррисене пытанса, çырмасенче, юрланă пулсан, урăх халăхсем умĕнче çăвара уçса тулли сасăпа юрлама вăтаннă пулсан, совет влаçĕ панă ырлăхсене пула чăваш халăхĕ ирĕклĕ пурнăçпа пурăнма тытăнчĕ,—çĕнĕ саманара унăн юрри те кĕрнеклĕн янраса кайрĕ. Çакă Павлова çĕнĕрен çĕнĕ юрăсем çырма хавхалантарнă. Вăл, ĕлĕкхипе хальхине танлаштарса, хăйĕн «Çырмари юрă» ятлă статьинче çакăн пек калать: «Ĕнтĕ «çырмари сыпăк», ĕнтĕ «çырмари эпоха» иртсе кайрĕ, ĕмĕрĕн кайри тăршшĕне кайса пытанчĕ. Чăваш музыкĕ чăтлăх çырмасенчен, симĕс йăмраллă ялсенчен тухса, пысăк хуласем тăрăх сарăлчĕ», тет.

Федор Павлович Павлов—чăваш хорĕн организаторĕ. Анчах унăн чăваш культуринчи вырăнĕ нумай пысăк: вăл шкул ачисене, хористсене кăна мар юрлама вĕрентнĕ çак чаплă музыкçă, унăн юрă кĕнекисем, кăштах ÿстеререх калас-тăк, чăваш халăхне хăйне юрлама вĕрентнĕ. Чăваш ялĕнче, колхозсенче тĕрлĕ-тĕрлĕ юрă хушшинче халĕ те Павлов юррисем илтĕнеççĕ. Каять-и чăваш ĕçлеме, килет-и вăл ĕçрен, пулать-и ĕçкĕре, авлантарать-и ывăлне, качча парать-и хĕрне, пулать-и пĕр-пĕр уявра,—Павловăн мĕнле те пулин юррине юрлать вăл. Чăваш халăхĕ унăн юррисене: «кусем манăн юрăсем», тесе юрлать. Калăпăр тата: Шупашкарта, Канашра, Çĕмĕрлере пĕр-пĕр конференци пырать, тейĕпĕр. Конференци ларăвĕ хыççăн каçпа концерт пулать. Делегатсем ытарайми паха юрăсем итлеççĕ. Савăннипе алă çупса: «Туй, туй», тесе кăшкăраççĕ. Ку вăл Павловăн «Туй» ятлă юррине юрласа парăр тенине пĕлтерет. Хор вара чăваш туйĕ «çĕр чĕтретсе» килни çинчен юрласа парать.

Ф. П. Павлов музыкисĕр республикăра пĕр концерт та пулса иртмест. Çакă вăл тахçанах ĕнтĕ йăлана кĕнĕ япала пулса тăнă.

Федор Павлович юррисенче чăваш халăхĕн йăлисем палăрса тăраççĕ, вĕсенче халăх чунĕ çĕкленсе тăрать,—киввисенче те, çĕннисенче те çавах: мĕншĕн тесен вĕсем — чăннипех те халăх юррисем, нациллĕ юрăсем.

Анчах кунта çакна та палăртма кирлĕ: Павловăн хăшпĕр юррисенче (сăмахран, «Вĕлле хурчĕ», «Шупашкар туйи», «Чĕнтĕрлĕ те кĕпер» тата ыт. те), савăнăçлă кĕвĕсемпе пĕрлех, чăвашсен ĕлĕкхи, пусмăр вăхăтĕнчи пурнăçĕнчен юлнă салхуллă кĕвĕсем илтĕнеççĕ.

Çавăн пек кĕвĕсене çак йĕркесене вуласан та туйма пулать:

Ěмěр вăрăм, пуçăм çамрăк,
Епле пурăнса ирттерем-ши?
(«Шупашкар туйи»).

Пирěн çамрăк чěресем пусăрăнмасть,
Тем чул хурлансан та.
Çынна курăнмасть.
(«Чěнтěрлě те кěпер»).

Павловăн музыкăллă творчестви, пěтěмěшпе илсен, хаваслă, оптимистла творчество. Çакна унăн колхоз пурнăçě çинчен, çамрăксем çинчен, Хěрлě Çар çинчен çырнă юррисем уççăн каласа параççě. Вěсен шутне «Харăс, харăссăн утар», «Колхоз юрри», «Çěнě улах юрри», «Çамрăксен юрри», «Хěрлě Çара каякансен юрри» тата ыт. те кěреççě.

Ф. П. Павловăн творчествинче симфониллě оркестрпа каламалли «Сăрнайпа Палнай» пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çак произведение пěрре итлетěн, иккě те, виççě те итлетěн... Çапах та итлесе «тăранаймастăн», ăна татах та татах итлес килет. Çакăн чухне вырăссен гениллě композиторě Глинка çырнă «Камаринская» произведенин кěввисем илтěннě пек туйăнаççě, анчах чăваш музыкин хăйне евěрлě сасси хăлхаран тухмасть. Мěншěн тесен «Сăрнайпа Палнай»—чăннипех те чăвашсен нациллě произведенийě, вăл пěтěмпех чăвашла, çав вăхăтрах классикла музыка çулě çинче тăрать.

Павлов—композитор кăна мар, вăл—чăвашсен малтанхи драматургěсенчен пěри, терěмěр. Вăл çырнă «Судра» тата «Ялта» пьесăсем чăваш литературинче хăйсен тивěçлě вырăнěсене йышăнчěç. Чăваш литературин историне вěреннě чухне вěсем çинчен каламасăр ниепле те иртсе кайма çук.

«Судра» комедие Павлов 1917—1918 çулсенче çырнă, 1919 çулта «Шурăмпуç» журналта пичетлесе кăларнă.

«Судра» пьесăри тěп геройсем — Ухтерккепе унăн Сăпани ятлă кинě, вěсем пěр-пěринпе вак-тěвек ěçсемшěнех чăкăлташса чěрре кěрсе каяççě, суд умне тăраççě.

Тěрěсссипе каласан, Ухтеркке — усал çын мар, вăл çав тери кăмăллă старик, хăй кăшт айвантарах, судра та пакăлтатма юрататъ. Ухтеркке судьяран кинне чарма ыйтать: «Улěмрен ман алăри çăкăра туртса илмелле мар ту! Кукăль те çимелле ту!»—тет вăл.

Ухтеркке старикěн кинě те тěттěм те айван хěрарăм, вăл старике картмасăр пурăннă пирки суда лекет. Анчах вăл судра та, килти пеkex, тем те пěр калать, айăпран: «Суять вăл, ан ěненěр ăна», тенипех хăтăлма шутлать.

Çапах та, тавлашсан-тавлашсан, Ухтерккепе Сăпани пěр-пěринпе килěшеççě. Судран вěсем: «Ěнтě пирěн, иксěмěрěн, кунта урăх ěç çук!» тесе тухса каяççě.

Революциччěнхи кивě ялта Ухтеркке пек, Сăпани пек сăнарсем кашни ялтах пулнă. Павлов вěсене хăйěн комедийěнче тěрěс кăтартса панă. Çырасса ăна халăх калаçакан илемлě, пурте ăнланмалла чěлхепе çырнă. «Судри» геройсенчен кашниех хăйěн чěлхипе калаçать.

Павловăн тепěр паха произведенийě—вăл «Ялта» ятлă драма. Ку драмăра автор 1914—1918 çулсенчи империализмлă вăрçă вăхăтěнчи чăваш ялěн пурнăçне, ял куштанěсен ирсěр ěçěсене кăтартса панă.

В. И. Ленин хăйěн пěр произведенийěнче, кулаксем 1914—1918 çулсенчи империализмлă вăрçă вăхăтěнче мěнле иртěхсе пурăнни çинчен каласа, вěсем—«чи усал, чи ирсěр, чи тискер эксплуататорсем», «çак юнěçенсем вăрçă вăхăтěнче халăх нушипе пуйрěç...», тенě.

«Ялта» драмăра кăтартса панă Çтаппан ятлă куштан—шăпах ěнтě халăх нушипе пуйнă, вăл—чи усал, чи ирсěр кулак-эксплуататор. Мěн кăна хăтланмасть вăл? Арăмне кунěн-çěрěн хěнесе чире кěртсе ярать. Çав вăхăтрах вăл, хăйěн ăскăн ÿтне чараймасăр, хусах арăмсем патне чупать, вěсене мăшкăлать, улталать, пурлăхне салатса ярать.

Драмăра Çтаппана хирěç тăракан лагерта эпир Ванюка, Елюка, Палляна тата ыт. те куратпăр. Ванюкпа Елюк—ял чухăнěсем, таса чěреллě, тÿрě кăмăллă çынсем. Вěсен пурнăçне империализм вăрçи аркатса ярать, çирěп юратăвне куштан Çтаппан пырса пăсать.

Павлов хăйěн пьесисене çырса пичетлесе кăларнă вăхăтра пирěн çěршывра пысăк событисем пулса иртнě. Помещиксемпе капиталистсен пусмăрне пěтерсе тăксанах граждан вăрçи пуçланса кайнă. Чăвашсем хушшинче те класс кěреше вě çивěчленнě. Анчах «Ялта» драма авторě, ку произведение хаяр класс кěрешěвěн обстановкинче çырнă пулин те, чăваш ялěнчи класс кěрешěвне тěрěсех кăтартса парайман. Тěслěхшěн çакна астутарма пулать. Ванюк, салтакран таврăнни хыççăн, ялта ирсěр ěçсем куратъ, анчах вěсене ăнланса илеймест, — ял куштанне хирěç, Елюка улталанă Çтаппана хирěç вирлěн кěрешес вырăнне хăйěн арăмне персе вěлерет.

«Ялта» драмăн çитменлěхěсене шута илсе, ăна 1932 çулта Георгий Парнепе Николай Айзман кăштах улăштарнăччě. Драмăн çак улăштарнă вариантне ěнтě халě те театр сенче лартаççě. Тÿрех калас пулать чăваш театрěсен сценисем çинче пěр пьесăна та «Ялта» чухлě лартман, 1923 çултан тытăнса ăна театрсенче 500 хут ытла кăтартнă.

Павлов хăйěн сăввисене, юррисене, пьесисене çырнă чухне чăваш халăх творчествипе анлăн усă курнă. Музыка ăсталăхне вăл вырăссен аслă композиторěсенчен Глинкăран, Чайковскирен тата ыт. вěреннě, пьесисене çырнă чухне вăл ытларах Островские кăмăлланă. Кунта тата çакна палăртни те вырăнлă: «Ялта» драмăра «Нарспи» поэма витěмě те сисěнет. Федор Павлович Павловăн творчествăллă çулě, музыкăри, литературăри çулě, тěрěссипе калас-тăк, вăл—Константин Иванов литературăра пуçласа янă çул, тăван халăхшăн, çěршывшăн тÿрě кăмăлпа ěçлес çул. Çак чăваш классикěсен пултарулăхне пирěн халăх чěререн кăмăллать, хăйсене вара хисеплесе асăнать.

Павлов вилнěренпе кăçалхи июнěн 2-мěшěнче çирěм çул çитрě. Юратнă композитор, драматург пирěнпе çук. Анчах унăн паха юррисем халě те чăваш ялěсенче, хули сенче, колхоз уй-хирěсенче, уявсенче янăраççě.

Кашниех Ф. П. Павлова, унăн ěçěсене аса илсе ырă сăмах калать:
— Юрлас килет унăн паха юррисене,—тет.

**В. ДОЛГОВ.**